# ОЛЬДЖИХ АДАМЕЦ

*Чехословаки Республики*

## МИР КĂВАКАРЧĂНĔ

Ырӑ кайăк, шурă кăвакарчăн,
Тĕнчипех эс халь вĕçен.
Тăванла салам илсе çитерччĕ
Советсен çĕрне пиртен!

Ырă кайăк, шурă кăвакарчăн,
Лар эс Кремль башни çине,
Ăшна ил хăюллăрах пулмашкăн
Ирĕк çĕрĕн сывлăшне!

Тĕнчери мĕнпур çĕршывсем урла
Вĕçмелле·çке сан инçе,
Пурте кăмăлланнă мир хыпарĕ —
Сан çунатусем çинче!

Акă вĕçрĕ те çўле хăпарчĕ
Шур çунатлă кулюкка,
Хамăр хуласем çинче вăл кумрĕ —
Çĕнĕ юр пек йăлтăркка.

Акӑ юрӑ пулчӗ, вӗҫрӗ тухрӗ
Вӑл Поль Робсон чӗринчен,
Хуп-хура Америкӑра халӗ
Явӑнать вӑл пур енче.

Анратаймӗ водородлӑ бомба
Кайӑка хӑй шӑршипе.
Ҫӗр тавра вӗҫет шур кӑвакарчӑн—
Туслӑх, мир хыпарӗ пек.